...НАЯ БИБЛИОТЕКА имени В. И. Ленина
Отдел Национальной ...

26-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1945
АВГУСТ
5
ВЫРСАРНИКУН
150(6901) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) Обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн, ЧАССР Верховный Совечĕн тата Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

Мускав облаçĕнчи колхозниксем Совет Союзĕнчи мĕнпур колхозниксене, колхозницăсене, машинно-тракторнăй станцисенчи работниксене, ялхуçалăх специалисчĕсене

ЧĔНСЕ КАЛАНИ

Хаклă юлташсем!

Эпир, Мускав облаçĕнчи колхозниксем, Сире, колхоз уйхирĕнчи ĕçсыннисене, чĕнсе калатпăр. Пирĕн чун-чĕрере халĕ сутă та хаваслă. Кашни яла праздник çитрĕ. Пирĕн çĕршыв нимĕç фашисчĕсене çĕнтерчĕ. Халĕ эпир çĕнтерӳçĕ-воинсем киле таврăнасса кĕтетпĕр. Вĕсем вăрçнă, тăшмана аркатнă вăхăтра эпир пурсăмăр та, ватăран пуçласа çамрăка çитиех, икĕ çыннăн ĕçлерĕмĕр. Хĕрлĕ Çар çăкăр та, çĕрулми те, какай та тата ыттисене те çителĕклĕ таранах илсе тăчĕ, промышленность чĕртавар илсе тăчĕ. Çавăнпа та эпир, колхозниксем, фронтран таврăнакансене хамăр мĕнле пурăнни, мĕнле ĕçлени, рабочи класпа тата интеллигенципе пĕрле Хĕрлĕ Çара çĕнтерӳ тума мĕнле пулăшни çинчен тулли сасăпа каласа пама пултаратпăр.

Çуркунне эпир МТС пулăшнипе, хамăрăн агрономпа пĕрле, вăйлă тырпулăн никĕсне хывса хăвартăмăр. Мускав облаçĕнчи колхозсем çураки планне 104 процент тултарчĕç. Çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 154 процент тултарнă тата çулталăкра тракторсемпе тумалли ĕçсен планне виçĕ чĕрĕк чухлĕ тултарнă. Июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне 15 лаша вăйлĕ кашни тракторпа вăтамран 215 гектар сухаланă. Облаçĕпе тислĕк тăкассине 150 процент, торф тăкассине 190 процент тултартăмăр. Июлĕн 10-мĕшĕ тĕлне çĕртме сухи туса пĕтертĕмĕр. Çĕрулмие сахалтан та икĕ-виçĕ хут купалама йышăнтăмăр: халĕ пĕрремĕш хут пĕтĕмпех купаласа пĕтертĕмĕр, çĕрулми лартнă лаптăкăн çуррине иккĕмĕш хут çумласа купалама ĕлкĕртĕмĕр. Пахчаçимĕçе вара кирлĕ чухлех çумласа тасатса тăрăпăр.

Пирĕн колхозсем мĕнпур Мускав облаçĕпе кăçал вăтамран çакăн чухлĕ тырпул туса илмелле:

Тĕнтырăсем гектартан 11,5 центнер;
Çĕрулми гектартан 125,0 центнер;
Кая юлса пулакан купăста гектартан 200,0 центнер;
Кишĕр гектартан 140,0 центнер;
Чĕкĕнтĕр гектартан 120,0 центнер.

Чи сахалтан эпир çакăн чухлĕ тырпул туса илме шутлатпăр. Малта пыракан колхозсен, сăмахран, пирĕн облаçри Дмитров районĕнчи чапа тухнă «Победа» колхозăн опычĕ çакна кăтартса парать: татах та тухăçлăрах тырпул пухса кĕме пулать, анчах вăйлă тырпул туса илес тесен, нумай ĕçлемелле, вăя шеллемелле мар, кашни сехете кăна мар, кашни минутăна та шута илмелле, кашни пучаха, кашни пĕрчĕне тăккаланасран сыхламалла.

Колхозник юлташсем! СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕпе большевиксен партийĕн Центральный Комитечĕн 1945 çулхи июлĕн 13-мĕшĕнче йышăннă постановленире тырпул пухса кĕртес тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлес вăхăтри ĕçсене мĕнле организацилемеллине питĕ тĕплĕн кăтартса пачĕç. Çак постановление тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пырасси кашни колхозпа колхозникăн таса тивĕçĕ пулса тăрать. Сире эпир уйхирте социализмлă ăмăрту анлăн сарса яма чĕнетпĕр.

Халĕ, тырпул пухса кĕме тытăнас умĕн, эпир ку ĕçе мĕнле хатĕрленсе çитнине, комбайнсемпе ытти машинăсем, тырпул пухса кĕртмелли инвентарьсем, транспорт мĕнлине татах тепĕр хут пăхса туса тĕрĕслерĕмĕр, хамăрăн ĕç планĕсене, çынсене ăста-ăста вырнаçтарса тухмаллине тепĕр хут пăхса тухрăмăр. Хамăрăн вăй-пăватпа майсене пăхса тухса шута илнĕ хыççăн эпир ăмăртура хамăр çине çакăн пек обязательствăсем илме йышăнтăмăр:

1. Тырпула кĕске вăхăтра тата йĕркеллĕ пухса кĕртмелле. Уйри тырпул пиççе çитнĕçемĕн суйласа илсе вырма тытăнатпăр. Çулса-вырса пăрахнă мĕнпур тырра çийĕнчех кĕлтесене çыхатпăр та вара çулма пуçланă хыççăн 10 кунран кая юлмасăр капана хывса лартатпăр. Çулма пуçланă хыççăн 5-мĕш кунĕнче хĕрсех авăн çапма тытăнатпăр.

2. Колхозăн чи малтанхи тивĕçне — государствăна ялхуçалăх продукчĕсем парассине—вăхăтра тата пĕтĕмпе пурнăçлас тесе, Хĕрлĕ Çарпа çĕршыва апатçимĕç парас тесе, ялхуçалăх продукчĕсене государствăна памашкăн кăтартуллăн хатĕрленсе çитетпĕр. Кашни колхозрах транспорт бригадисем тăватпăр. Тырпул пухма тытăнсан малтанхи кунсенчен пуçласах государствăна тырпул пама тытăнатпăр та вара мĕн парса татиччен ку ĕçе пĕр кунлăха та чармастпăр. Государствăна тырпул памалли плана октябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне пĕтĕмпех тултаратпăр.

3. Çĕрулмие, тĕрлĕ тымар-çимĕçсене октябрĕн 10-мĕшĕ тĕлне, купăстана ноябрĕн 5-мĕшĕ тĕлне пухса кĕртетпĕр. Государствăна çĕрулми октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне, тĕрлĕ пахчаçимĕçсене ноябрĕн 15-мĕшĕ тĕлне парса тататпăр.

4. 1946 çул валли пур ялхуçалăх культурисен вăрлăхне те кирлĕ таранах хатĕрлесе хуратпăр, вăл шутра тĕп пахчаçимĕç культурисен вăрлăхне хамăр облаçрех туса хатĕрлетпĕр. Нумай çул хушши ӳсекен курăк вăрлăхне кăтартуллăн пухса кĕрсе çапса тата шĕкĕлчесе хуратпăр. Çак ĕçсене пурне те палăртнă вăхăтра туса пĕтеретпĕр.

5. Эпир вăйлă тырпул пухса кĕме çеç мар, тата çитес çул та вăйлă тырпул туса илмешкĕн шанчăклă никĕс хывса хăварма тăрăшатпăр. Кĕрхи культурăсене икĕ хутчен çĕртме тунă пусса çеç тата агротехника кăтартса панă чи лайăх вăхăтсенче сентябрĕн 5-мĕшĕччен акса пĕтеретпĕр. Кĕрхи çĕртмене октябрĕн 20-мĕшĕ тĕлне сухаласа пĕтеретпĕр.

6. Тырпул пухса кĕртнĕ тата ялхуçалăх продукчĕсене хатĕрленĕ вăхăтра колхозри ĕç дисциплинин тата организацилĕхĕн тĕслĕхне кăтартăпăр. Тырпул пухса кĕртес ĕçе эпир хамăрăн колхозсенчи ĕçлеме пултаракан пур çынна та хутшăнтарма сăмах паратпăр. Хăйсен ĕç нормисене тултарайман пĕр колхозник та, пĕр колхозница та, пĕр тракторист та, комбайнер та, лаша кӳлсе тырпул пухмалли машинăпа ĕçлекен пĕр çын та, молотилкăн пĕр машинисчĕ те, пĕр лавăçă та ан пултăр тесе тăрăшатпăр. Çак нормăсем вĕсем чи пĕчĕк нормăсем пулаççĕ. Пирĕнтен кашниех çав нормăсене ирттерсе тултарма пултараççĕ. Малта пыракансен опычĕ ĕç чăнах та çакăн пек тăнине пуринчен лайăх кăтартса парать. Эпир кашни колхозра тырпул тухăçне бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăмăн шута илме, ялхуçалăх культурисен тырпул тухăçне планпа палăртнинчен ирттернĕшĕн колхозниксемпе трактористсене ĕçшĕн хурса тӳлеме сăмах паратпăр.

Эпир хамăрăн хаклă çĕнтерӳçĕ-воинсене Хĕрлĕ Çартан таврăнассине хаваслансах кĕтетпĕр, вĕсене тивĕçлипе кĕтсе илессине организацилеме, вĕсемшĕн тăрăшма сăмах паратпăр.

Колхоз уйхирĕнчи ĕçсыннисем!

Большевиксен партийĕ, пирĕн тăван Иосиф Виссарионович Сталин хресченсене колхоз çулĕ çине тăратрĕç. Парти, Сталин юлташ пирĕн çĕнĕ, артельти пурнăçа малтанхи утăмсенчех ывăнма пĕлмесĕр ертсе пычĕç. Вĕсем колхозсене çирĕп ура çине тăратрĕç, пирĕн колхоз стройне пурнăç вăйĕн уйăрăлми пайĕ туса пама пулăшрĕç. Парти, Сталин юлташ вăрçă вăхăтĕнчи йывăр çулсенче пирĕн ĕçе хавхалантарса пычĕç, халĕ хамăрăн Тăван çĕршыва çĕнĕрен аталанса чечеклесси патне илсе пыраççĕ.

Пире çĕнтерӳсем тума хавхалантаракана тата организацилекене—большевиксен партине, халăхсен юратакан çулпуçне Сталин юлташа тивĕçлĕ пулар!

Вăя шеллемесĕр ĕçленипе хамăрăн Тăван çĕршывăн аслă çĕнтерĕвне тивĕçлĕ тырпул туса илер!

Сывă пултăр пирĕн социализмлă аслă Тăван çĕршыв!

Сывă пулччăр совет хресченĕсем!

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çара—çĕнтерӳ тунă çара—мухтав!

Хамăрăн аслă çулпуçе, учителе тата колхоз хресченĕсен тусне аслă Сталина—мухтав!

Мускав облаçĕнчи 6.446 колхозра колхозниксен пухăвĕнче сӳтсе-явса йышăннă. Чĕнсе каланине 274. 187 колхозникпа колхозница алă пуснă.

И. В. Сталин, Гарри Трумэн тата К. Эттли Черчилльпе Иден патне янă послани

БЕРЛИН, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Генералиссимус Сталин, Президент Трумэн тата Премьер-министр К. Эттли Англин премьер-министрĕ пулнă Уинстон Черчилль патне тата Ют çĕршыв Ĕçĕсен Министрĕ пулнă Антони Иден патне Берлинри Конференци вăхăтĕнчи ĕçсемшĕн вĕсене тав туса послани янă. Посланире çапла каланă:

«Президент Трумэн, Генералиссимус Сталин тата Премьер-министр Эттли, Берлинри Конференцин юлашки ларăвне пухăннăскерсем, Уинстон Черчилль патне саламлă сăмах ярас терĕç. Вĕсем ăна Берлинри Конференцин пĕрремĕш пайĕ вăхăтĕнчи ĕçсемшĕн тав тăваççĕ. Конференцин çав малтанхи пайĕнчи ĕçсем ăна ăнăçлă вĕçлеме пысăк пулăшу пачĕç. Вĕсем вăл иртнĕ конференцисенче тата вăрçă пынă вăхăтра яланах пирĕн çĕнтерӳн пĕтĕмĕшле ĕçĕшĕн тата çирĕп миршĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçленине ăшă кăмăлпа аса илеççĕ. Унăн аслă ĕçне пĕтĕм тĕнче пĕлсе тăрать, ăна нихăçан та манăçа кăлармĕç».

Гарри Трумэн, И. В. Сталин, К. Эттли алă пуснă.

Берлин, 1945 çулхи августăн 1-мĕшĕ.

Гарри Трумэн, И. В. Сталин тата К. Р. Эттли алă пуснă иккĕмĕш посланире çапла каланă: «Президент Трумэн, Генералиссимус Сталин тата Премьер-министр Эттли, Берлинри Конференцин юлашки ларăвне пухăннăскерсем, Конференцин малтанхи пайĕнче пулăшу панăшăн Идена хăйсен саламне ярса тав тăваççĕ. Вĕсем вăл иртнĕ конференцисенче тата пĕтĕм тĕнчери канашлусенче, çĕнтерӳ ĕçне, пĕрлĕхе тата мире çав тери пысăк пулăшу панăскерсенче, тăрăшса ĕçленине асра тытаççĕ».

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМЕН УКАЗĔ

ХУСАН ЧУГУН ÇУЛĔН УЙРĂМАХ ПАЛĂРНĂ РАБОТНИКĔСЕНЕ ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН ХИСЕПЛĔ ГРАМОТИПЕ НАГРАДĂЛАССИ ÇИНЧЕН

Сталинла железнодорожниксен кунĕ 10 çул тултарнине палăртас тесе, Хусан чугун çулĕн уйрăмах палăрнă çак работникĕсене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăлас:

1. Ромилия Искандрофна **Азизовăна** — Канашри вагонсем юсакан заводăн литейнăй цехĕнчи формовщицăна.
2. Семен Александрович **Александрова** —çулăн 17-мĕш дистанцийĕн 3-мĕш околоткĕнчи кĕпер хуралçине.
3. Нина Анисимовна **Анисимовăна** — çулăн 17-мĕш дистанцийĕн 5-мĕш ĕç участокĕнчи бригадира.
4. Перасковья Семеновна **Болдашкинăна** —çулăн 4-мĕш дистанцийĕн 5-мĕш околоткĕнчи юсакан рабочине.
5. Александр Ефимович **Борисова** — çулăн 14-мĕш дистанцийĕн бригадине.
6. Евдокия Павловна **Бурмистровăна**— çулăн 14-мĕш дистанцийĕн çул пăхаканне.
7. Федор Алексеевич **Бурмистрова** — çыхăнун 3-мĕш дистанцийĕн сигнализаципе çыхăнун старши электромеханикне.
8. Александр Иванович **Быкова**—БКП(б) Чăваш Обкомĕн промышленноçпа транспорт пайĕн инструкторне.
9. Александра Ивановна **Варламовăна**— Улатăр станцийĕн чугун çул больницинчи парти организацийĕн секретарьне.
10. Антонина Емельяновна **Волковăна** — çулăн 17-мĕш дистанцийĕн 3-мĕш околоткĕнчи юсакан старши рабочие.
11. Петр Константинович **Воробьева**— Канаш станцийĕн деповĕнчи паровоз машинистне.
12. Павел Григорьевич **Григорьева** — Ишлей разъездĕнчи стрелочника.
13. Василий Андреевич **Данилева** — Канашри вагонсем юсакан заводри токаре.
14. Наталья Дмитриевна **Дашковăна** — Улатăр станцийĕн топливо складĕнчи рабочие.
15. Александр Васильевич **Дюжева** — Канашри вагонсем юсакан заводри тимĕрçе.
16. Николай Евдокимович **Евдокимова** —çулăн 17-мĕш дистанцийĕн бригадирне.
17. Павел Васильевич **Ермолаева** — Улатăр станцийĕн электропунктĕнчи старши электромонтера.
18. Евдокия Михайловна **Ивановăна**— çулăн 17-мĕш дистанцийĕн 2-мĕш околоткĕнчи çул пăхакана.
19. Александр Григорьевич **Ивлева**— Улатăр станцийĕнчи вагонсене пăтакан старши осмотрщика.
20. Николай Антонович **Каплуна** — Улатăр станцинчи Хусан чугун çулĕн йывăç каскалакан завод начальникне.
21. Пелагея Федоровна **Кĕдяровăна** — çулăн 16-мĕш дистанцийĕн юсакан рабочине.

Малалли пулать.

ВЦСПС-ра, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главснаблесра тата Çулйĕр Халăх Комиссариатĕнче

Чугун çул валли вутă хатĕрлессипĕн облаçсемпе республикăсем хушшинче пыракан Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăвăн 1945 çулхи июнь уйăхĕнчи итогĕсене пăхса тухса, ВЦСПС, СССР Совнаркомĕ çумĕнчи Главснаблес тата Çулйĕр Халăх Комиссариачĕ ăмăртура Латви ССР-ĕ, Чăваш АССР-ĕ тата Мускав облаçĕ мала тухнине палăртнă.

Чăваш АССР Совнаркомне Оборонăн Государственный Комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне тата 75.000 тенкĕ премии пама йышăннă.

Наукăпа техника этем телейĕшĕн ĕçлĕç

Тĕнче умне нумаях пулмасть тухса тăнă хăрушлăха яланлăхах сирсе янă. Урнă фашизма çĕнтерни Берлинри конференцире хăйĕн пĕтĕм аслăлăхĕпе тухса тăчĕ. Тапăклăнах парăннă Германие çав тери çирĕп условисем тăратнă пирки Германи империализмĕ уççăн е вăрттăн формăпа урăх нихăçан та чĕрĕлсе тăраймĕ. Нимĕç халăхĕ этемлĕх умĕнче çав тери айăплă пулнă пулин те, конференци йышăннă решенисенче демократиллĕ виçĕ аслă держава нимĕç халăхне демократипе мир никĕсĕ çинче малашнехи пурнăçа аталантарма панине уççăнах палăртнă.

Тăшмана çĕнтернĕ виçĕ держава туслăн пĕрлешсе ĕçлени Берлинри конференцире çĕнĕрен тата лайăхрах палăрчĕ. Этемлĕх умĕнче çĕнĕ, ирĕклĕ демократиллĕ общество çулĕпе каймалли шанчăклă пуласлăх уçăлать. Фашистсен аллинче техникăпа наука нихăçан курман инкексемпе аркатусен çăлкуçĕ пулса тăначчĕ. Паянтан пуçласа тĕнче çакна шанса тăма пултарать: тепĕр хут кун пек пулас çук, наукăпа техника этемлĕх телейĕпе ырлăхĕшĕн çĕнĕрен малалла ĕçлесе пырĕç.

Берлинри конференци çинчен пĕлтернине вуласа, Совет Союзĕнчи халăхсем Хĕрлĕ Çарпа унăн аслă çулпуçне Сталин юлташа, хамăр Тăван çĕршыва ĕмĕрлĕхе чапа кăларнăскере, чун-чĕререн тав тăваççĕ.

Академик С. И. ВАВИЛОВ,
СССР Наука академийĕн президенчĕ.

Железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунĕ

Вунă çул каярах, железнодорожниксене йышăннă чухне, Сталин юлташ çапла каланă: «Совет Союзĕнчи нумай йышлă облаçсемпе районсене çыхăнтарса тăракан чаплă чугун çул транспорчĕ пулмасан. Совет Союзĕ государство пулман та пулĕччĕ. Совет Союзĕнчи чугун çул транспорчĕн аслă пахалăхĕ çавăнта паларса тăрать те ĕнтĕ».

Чугун çулсем пулмасан, вĕсен ĕçне лайăхлатмасан, çĕршыва индустриализацилес тата ялхуçалăхне коллективизацилес задачăсене татса пама, пирĕн çĕршывăн çар хăватлăхне ӳстерме тата кая юлса пынă районсен хуçалăхĕпе культурине аталантарас ĕçе пурнăçа кĕртме май пулман пулĕччĕ.

1935 çулхи июлĕн 30-мĕшĕнче железнодорожниксене Кремльте йышăннă чухне Сталин юлташ дисциплинăпа ĕçри йĕркелĕх ыйтăвне, чугун çул çинче ĕçлекен кашни работникăн вырăнĕ çинчен тăракан ыйтăва, транспорт ĕçĕнчи пур пайсем те лайăх та пĕр чарăнмасăр ĕçлес ыйтăва çĕнĕлле лартрĕ. Сталин юлташ çапла каларĕ: «...железнодорожниксенчен пысăк ĕçре тата пĕчĕк ĕçре ĕçлекен çынсем пур, анчах транспортра кирлĕ мар е нимĕне тăман çынсем çук. Чи пысăк руководительсенчен пуçласа чи «пĕчĕк» работник — стрелочник, мазчик, уборщица патне çитиех — пурте паллă вырăн йышăнаççĕ. Мĕншĕн тесен транспорт вăл конвейер пекех, унта кашни работникăн, кашни винтикăн ĕçĕ паха. Хăçан та хăçан çавна ăнланса илетĕр эсир, железнодорожник юлташсем, транспорт çинчи пур пайсен, мĕнпур механизмри работниксен ĕçĕсене йĕркелесе çитеретĕр,—эскă вăл чăн-чăн, большевикла дисциплина пулать те вара».

Сталинла пилĕкçуллăхсем хушшинче транспорта çĕнĕ техника никĕсĕ çинче урăхлатса йĕркеленĕ, çĕршыври чугун çул ĕçне лайăхлатас шутпа организаципе техника тĕлĕшĕнчен пысăк ĕçсем тунă. Большевиксен партийĕ ертсе пынипе, транспортра чугун çул ĕçне чăрмантарса тăракан «предельчество» тенине аркатса тăкнă, хамăр çĕршыва, Ленин—Сталин ĕçне пĕтĕм чун-чĕререн парăнса тăракан çĕнĕ кадрсем ӳссе çирĕпленнĕ. Чугун çул çинче стахановла-кривоносла юхăм вăйлăн аталанчĕ. Транспортра стахановла юхăмăн ялавне çӳле çĕкленĕ Кривонос, Лунин, Папавин машинистсен ячĕсем, Закорко тата Водмажко диспетчерсен ячĕсем, поездсене йĕркелекен Красновпа Кожухарь ячĕсем, Рыженко кондукторăн, Аладин кассирăн, Неудахина стрелочницăн, Сидоренко весовщикăн ячĕсем пĕтĕм çĕршывра паллă пулса тăчĕç.

Партипе правительство транспорт ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе тунă ĕçсем тавар турттарасси ӳссе пынинче питĕ уççăн палăрчĕç. Отечественнăй вăрçă пуçланнă тĕле чугун çул çинчи тавар тиесси, 1913 çулхипе танлаштарсан, 4 хут ытларах ӳсрĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă çĕнĕ пысăк задачăсем кăларса тăратрĕ. «Транспорт,— тенĕ Сталин юлташ,—тылпа фронта çыхăнтарса тăракан чи паллă майсенчен пĕри пулса тăрать. Темĕн чухлĕ хĕçпăшалпа пемелли хатĕрсем тусан та, вĕсене вăхăтра фронта çитермесен, вĕсем фронт ĕçĕшĕн ниме юрăхсăр груз пулса юлма пултараççĕ. Калас пулать, фронта хĕçпăшал, пемелли япаласем, апат-çимĕç, тумтир тата ытти те турттарса пырас ĕçре транспорт питĕ паха вырăн йышăнса тăрать».

Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăннă гитлеровецсем чугун çул ĕçне чарса лартма тăтланчĕç. Анчах та вĕсен ĕмĕчĕсем путланса ларчĕç. Патриотла туйăмпа хавхаланнă железнодорожниксем ывăнма пĕлмесĕр ĕçлесе хăйсен мĕнпур вăйне тата пĕлӳлĕхне çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕçе хурса, фронта пĕр чарăнмасăр кирлĕ япаласем турттарса тăчĕç.

Хаяр вăрçă пынă вăхăтра çĕршыв экономики, унăн транспорчĕ пĕрмаях ӳссе пынине вăрçăсен историйĕ курман. Çав задачăна Совет Союзĕнчи социализмла транспорт анчах татса пама пултарчĕ. Çакăнта ĕнтĕ пирĕн социализмла хуçалăх системин. Совет Государствин хăвачĕ. большевиксен партийĕпе аслă çулпуç Сталин юлташ ăслăн ертсе пыни уççăн палăрса тăрать.

Вăрçă пынă вăхăтрах пирĕн тылри ĕç ӳссе çирĕпленсе пычĕ. Уралта çĕнĕ заводсем, домнăпа мартен кăмакисем, кăмрăк шахтисем, электростанцисемпе рудниксем ӳссе çитĕнчĕç. Çĕнĕ чугун çул линийĕсем тăвас тĕлĕшпе те çав тери пысăк ĕçсем пулса иртрĕç. 1941—1945 çулсенче Çурçĕр Печера çулне, Сорока—Обозерск, Акмолинск—Карталы, Саратов — Иловля, Кизляр—Трусово, Тихвин—Будогощ, Ахтуба—Паромная тата ытти нумай çулсене туса çитерсе ĕçе янă.

Вăрçăн пур тапхăрĕсенче те железнодорожниксем хăйсен ĕçĕсене чаплăн та паттăррăн туса пычĕç.

Çак ĕçе пирĕн аслă çулпуç тата Верховный Главнокомандующи тивĕçлипе пысăккăн хакларĕ. 1943 çулхи ноябрĕн 6-мĕшĕнче тунă хăйĕн докладĕнче Сталин юлташ çапла каларĕ: «...вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсемпе топливо çитменнине пăхмасăрах, эпир фронта мĕн кирлине парса тăма пултартăмăр пулсан, çакăнта чи малтанах транспортри рабочисемпе служащисен тивĕçлĕхĕ палăрать».

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче чугун çул работникĕсем вăя шеллемесĕр ĕçленине правительство аслă наградăсем парса палăртрĕ. Транспорт çинчи чи лайăх работниксене 127 çынна Социализмлă Ĕç Геройĕн ячĕсене панă. 17 пин железнодорожнике тата чугун çул çарĕсенчи боецсене, офицерсемпе генералсене 32 пин çынна вăрçă вăхăтĕнче Совет Союзĕн орденĕсемпе тата медалĕсемпе наградăланă. 53 пин транспорт работникне Мускав, Ленинград, Сталинград, Одесса, Севастополь хулисене, Кавказа тата Совет Союзĕн Поляр лешне хӳтĕленĕшĕн медальсемпе наградăланă.

Чугун çул транспорчĕнче хĕрарăмсем те пысăк ĕçсем тунă. Вĕсенчен нумайĕшĕ, фронта кайнă упăшкисем вырăнне ĕçе тăрса, чугун çул çинчи йывăр профессисене алла илнĕ. Вĕсем чи йывăр ĕçе кайнă. Хĕрарăмсем хушшинчен транспорт ĕçĕнчи паллă командирсем ӳссе çитĕнчĕç.

Вăрçă кунĕсенче, мирлĕ вăхăтри пекех, большевиксен партийĕ тата Совет Правительстви, Сталин юлташ транспортшăн, унта ĕçлекен çынсемшĕн çав тери тимлĕн тăрăшса пычĕç. Вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене пăхмасăрах, чугун çулсем тăвас тата юсас ĕçе государство пит нумай укçа-тенкĕ хыврĕ. СССР Верховный Совет Президиумĕн 1943 çулхи сентябрĕн 4-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, транспортра ĕçлекенсем валли уйрăм званисем тунă. Ку вара железнодорожниксен ĕçне тата ытларах хаклани пулчĕ.

* * *

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче çĕнĕ вăйпа саралса кайнă социализмлă ăмăрту железнодорожниксене вăрçă вăхăтĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме, транспорт умне лартнă задачăсене ăнăçлăн татса пама пулăшрĕ. Социализмлă ăмăртăва большевиксем ертсе пыраççĕ.

Отечественнăй вăрçă вăхăтĕнче транспорт ĕçне Лунинла юхăм çав тери пысăк пулăшу пачĕ. Стахановец-лунинецсем укçа-тенке, материалсене, чĕртавара, топливăна перекетлессишĕн. паровозсене, вагонсене, станоксене нумай вăхăт хушши юсамасăр ĕçлеттерессишĕн тăрăшнă. Вăрçă вăхăтĕнче Тулăри машинист Кобков юлташ паровозсене вутăпа хутма пуçлани паллă вырăн йышăнса тăрать.

Чугун çул работникĕсемпе чугун çул çарĕсене Совет Союзĕн районĕсемпе облаçĕсене тăшман оккупацийĕнчен хăтарнă вырăнсенчи чугун çулсене юсас тĕлĕшпе пысăк ĕç тиврĕ. Вăрçă вăхăтĕнче СССР территорийĕнче 48 пин километр тăршшĕ чугун çул юсаса ĕçе янă, ют çĕршыв территорийĕсенче 28 пин километр тăршшĕ чугун çул юсаса ĕçе янă. Унсăр пуçне 2.393 чугун çул кĕперĕ юсанă, вăл 214 километр тăршшĕ шутланать. Вăрçăн юлашки çулĕсенче юсав ĕçĕсем нихăçан курман пысăк хăвăртлăхсемпе пулса пынă.

* * *

Кăçалхи çул железнодорожниксен кунне тăшмана çĕнтернĕ хаваслă кунсенче, совет халăхĕпе унăн паттăр Хĕрлĕ Çарĕ Сталин юлташ ертсе пынипе тăшмана аркатса тăкнă кунсенче кĕтсе илетпĕр.

Пирĕн çĕршыв халĕ мирлĕ аталану тапхăрне кĕчĕ. Аслă Сталин пирĕн халăха вăрçă кунĕ сиенсене хăвăртрах тӳрлетме, Совет Государствин хăватне тата çӳлерех çĕклеме чĕнсе каларĕ. Чугун çул транспорчĕ умне çĕнĕ задачăсем тухса тăчĕç. Çав задачăсене пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле пулать. Ĕçри çитменлĕхсене палăртса, самокритикăпа усă курса, вĕсене хăвăртрах пĕтермелле.

Мирлĕ условисенче чугун çул транспорчĕ умне çавăн пекех тавар турттарассин хăйне ларакан хакне йӳнетес, хуçалăх расчетне çирĕплетес тата ытти задачăсем те тухса тăраççĕ.

Транспортра вирлĕн аталаннă социализмлă ăмăртăвăн тĕп задачисен шутĕнче тавар турттармалли государство планне пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырас задача тăрать. Кунта чи малтан халăх хуçалăхне питĕ кирлĕ грузсем—çĕркăмрăк, руда, металл, тырă турттарасси кĕрет. Ирĕке кăларнă районсенчи чугун çулсене кĕске вăхăтра вăрçăччен хăватпа ĕçлеттерме тытăнмалла, транспорта юсас ĕç çав районсенчи пĕтĕм халăх хуçалăхне аталантарас хăвăртлăхсемпе тан пымалла, транспорт ĕçне çĕнĕ пусăма хăпартмалла.

Железнодорожниксен сталинла кунĕ яланах транспорт хĕле кĕме хатĕрленине пăхса тухмалли кун шутланнă. Иртнĕ хĕлле пулнă çитменлĕхсене пĕтĕмĕшпех шута илмелле, йывăрлăхсен сăлтавĕсене тĕплĕн пăхса тухмалла, хĕле хатĕрленес тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнмалла. Хĕле кĕме хатĕрленмелли плансем пурнăçа кĕрсе пынине контроллесе тăмалла.

Паровоз хуçалăхĕ тĕлĕшпе чи малтан паровозсене лайăх юсаса ăшă тытакан тумалла, депо, водокачка, кăмрăк склачĕн çурчĕсене хĕле лайăх хатĕрлемелле; водокачкăсем патне топливо илсе пымалла, кашни паровоз деповĕнчех детальсемпе запаслă пайсен запасне туса хумалла.

Пĕтĕм станци хуçалăхĕсене хĕле хатĕрлесе çитермелле, механизациленĕ сăртлăхсене юсас тĕлĕшпе кирлĕ ĕçсене туса ирттермелле, сортировка тăвакан парксене сутă пулмалла. Чи малтан, пысăк узелсемпе станцисене хĕле хатĕрлесси çине тимлĕн çаврăнса пăхмалла. Груз хуçалăхне тата юр тасатмалли хатĕрсене хĕле хатĕрлесси те паллă вырăнта тăрать. Çул пăхакансемпе вагон юсакансем те хĕле тĕплĕн хатĕрленмелле.

Хĕле хатĕрленес ĕçри чи паха ĕç — кадрсем хатĕрлесси, вĕсем хăйсен задачисене пурнăçа кĕртме хатĕр пулмалла тăвасси, хĕлле пирвайхи хут ĕçлекен çынсене ĕçе хăнăхтарасси, вĕсем валли тивĕçлĕ условисем туса парасси, вĕсене хĕлле ĕçлемелли тумтир туянтарасси пулса тăрать.

Çавăн пекех Мускав çыннисен пуçарса янă ĕçе—промышленность предприятийĕсем паровозсене шефа илес ĕçе манса кайма юрамасть. Çакăнпа пĕрлех промышленность предприятийĕсене те вĕсен транспортне тата çулйĕрĕсене хĕле хатĕрлеме пулăшас пулать.

СССР Верховный Совечĕн XII-мĕш сессийĕ «Ватăрах çынсене Хĕрлĕ Çартан киле ярасси çинчен» йышăннă закона пурнăçа кĕртсе, Хĕрлĕ Çарăн паттăр воинĕсене тăван вырăнĕсене куçарас ĕçе вăхăтра тата тимлĕн туса пымалла.

* * *

Большевиксен партийĕ вĕрентсе ӳстернĕ совет железнодорожникĕсем Тăван çĕршыв Отечественнăй аслă вăрçăра кăларса тăратнă задачăсене чыслăн пурнăçа кĕртрĕç. Мирлĕ строительство пурнăçĕ пуçланнă май, вăрçă кунĕсенчи пекех, железнодорожниксем хăйсен ĕçĕнче пирĕн аслă çулпуç тата учитель Сталин юлташ кăтартса панă çулпа пырĕç.

В. СОЛОГУБОВ,
Çулйĕр Халăх Комиссарĕн Заместителĕ.

Железнодорожниксен кунĕ ячĕпе тунă çитĕнӳсем

Республикăри чугун çулсем çинчи работниксемпе чугун çул валли ĕçлекен предприятисенчи рабочисем железнодорожниксен Пĕтĕм Союзри кунне ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе кĕтсе илчĕç.

* * *

Хусан чугун çул управленийĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕсене тытакан Канаш деповĕпе Канаш станцийĕн коллективĕсем июль уйăхĕнче те малти ретре пулассишĕн ăмăртса ĕçлерĕç. Çак ăмăртура кунти машинистсем хăйсен ĕçне татах та лайăхлатнă. Вĕсем паровозсене çӳретес хăвăртлăха ӳстернĕ, нормăпа пăхнинчен ытларах тавар турттарса панă, çунтармалли япала сахал мар перекетлесе хăварнă. Депори работниксем çĕмрĕк паровозсене лайăх юсаса кăлараççĕ.

Канаш станцийĕнчи работниксем те иртнĕ уйăхра мухтава тивĕçлĕ ĕçлерĕç. Железнодорожниксен кунне кĕтсе илме хатĕрленсе, вĕсем поездсене вăхăтра йышăнса вăхăтра ăсатнă, поездсем станцăра тăрас вăхăта чакарнă. Тавар станцийĕнче ĕçлекенсем грузсене тиес тата пушатас ĕçе хăвăртлатнă т. ыт. те.

* * *

Улатăр деповĕнче ĕçлекенсем железнодорожниксен сталинла кунĕ ячĕпе илнĕ обязательствăсене чыслăн пурнăçа кĕртнĕ. Железнодорожниксен уявĕ умĕнхи ăмăртура кунти машинистсем поездсене нормăпа пăхнинчен талăкра 15 километр ытларах çӳретнĕ, паровозăн техникăллă хăвăртлăхне 2 километра яхăн ӳстернĕ. Çав вăхăтрах вуншар тонна кăмрăк перекетлесе хăварнă. Ăмăртура уйрăмах Степановпа Бучаев, Фроловпа Баденков тата Киреевпа Якунин машинистсем лайăх ĕçлеççĕ. Вĕсен пур ĕçĕ те кăтартуллă шутланать.

Депо работникĕсем паровозсене хĕле хатĕрлеме тытăннă. Чылай паровозсене юсаса çитернĕ, ăшă тытмалла тунă, сăрласа илемлетнĕ. Паровозсене хĕле хатĕрлес ĕçре Кузнецовпа Дорохов машинистсем пуçарулăхпа пултарулăх кăтартаççĕ.

* * *

ВЦСПС-па Çулйĕр Халăх Комиссариачĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне илнĕ Канашри вагонсем юсакан завод коллективĕ железнодорожниксен кунне производствăлла пысăк парне кӳчĕ. Завод июль уйăхĕнче тĕп ĕçсене график тăрăх туса пынă, чылай цехсем хăйсен производство планĕсене срокчен тултарнă. Июль уйăхĕнче уйрăмах рессорсем тăвакан, йывăç каскалакан, вагонсем юсакан тата механически цехсем лайăх ĕçленĕ.

Железнодорожниксен кунне лайăх паллă тăвассишĕн кĕрешсе, заводри чылай стахановецсемпе рабочисем хăйсен ĕç тухăçлăхне ӳстернĕ. Механически цехри Охрименко стахановец буксăсене нормăпа пăхнинчен 10 хут нумайрах якатать. Сменăри задание Григорьев токарь 500 процент, Фролухин рабочи 340 процент тултараççĕ.

* * *

Красноармейскипе Чурачăк районĕнчи колхозниксем Канашпа Шупашкар хушшинчи чугун çула юсама пулăшаççĕ. Вĕсем ку таранччен пурĕ 20 километр çул юсанă. Халĕ çул хĕрринчи канавсене, шыв юхмалли çулсене тӳрлетеççĕ.

Фридрих Энгельс

(Вилнĕренпе 50 çул тултарнă тĕле)

Фридрих Энгельс—наукăллă коммунизмăн никĕсне хывакансенчен пĕрийĕ—хăйĕн чаплă пурнăçне рабочи класăн чун-чĕререн парăнса тăрăшас ĕçе, капитализм пусмăрлăхне пĕтерессишĕн кĕрешес ĕçе панă. Энгельсăн ячĕ Марксăн ячĕпе уйрăлми çыхăнса тăрать.

Маркспа Энгельс—пролетариатăн аслă учителĕсем, наукăллă коммунизм тăвакансем, рабочи класăн революциллĕ теорине тăвакансем. Вĕсем капитала хирĕç кĕрешес, социализмлă çĕнĕ общество тăвас ĕçре рабочи класăн тĕнчери историллĕ вырăнне кăтартса панă. Вĕсем капитализм аталанăвĕ тата классен кĕрешĕвĕ пролетари революцийĕ урлă капитализм арканасси тата пролетариат диктатури пулса тăрасси патне илсе пынине наука тĕлĕшĕнчен кăтартса панă. Вĕсен вĕрентĕвĕ—марксизм—философин, политика экономийĕн тата социализмăн аслă представителĕсен вĕрентĕвĕсене малалла генилле аталантарни пулса тăрать.

«Маркспа Энгельс хайсен наукăллă ĕçĕсенче социализм вăл ĕмĕтленекенсем шутласа кăларнă япала пулманнине, вăл халăхри обществăри производство вăйĕсем аталаннин вĕçĕнчи тĕллевĕ тата кирлĕ результачĕ пулса тăнине ăнлантарса пачĕç. Çу таранччен çырнă пур истори те классен кĕрешĕвĕн историйĕ, пĕр обществăллă класс тепринне çĕнтерни пулнă. Классен кĕрешĕвĕн тата классем пуçпулса тăрассин никĕсĕ — уйрăм çынсен харпăрлăхĕ тата обществăллă производствăри йĕркесĕрлĕх пĕтиччен, çакă çав çавах тытăнса тăрĕ» (Ленин).

Маркспа Энгельс рабочи класăн революциллĕ теорине туса хатĕрлессине питĕ пысăк вырăна хунă. Çав теорисĕр рабочи класăн революциллĕ юхăмĕ пулма пултараймасть. Çак теорие тăвас тĕлĕшпе Энгельс хисеплĕ вырăн йышăнса тăрать. Вăл теори тĕлĕшĕнче çырнă ĕçсем наукăллă коммунизма çав тери пуянлатнă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн 40-мĕш çулĕсенчех. Маркспа Энгельс хăйсен «Таса çемье» тата «Нимĕç идеологийĕ» ятлă малтанхи произведенийĕсенче коммунизм мировоззренийĕн никĕсĕсене хывнă. Вĕсем Гегелĕн тата ун хыççăн каякансен—Бауэр тăванĕсемпе Штирнерăн реакциллĕ идеалистла философи системине питĕ хытă критиклерĕ. Фейербахăн тулли мар, çурма-материализмĕн çитменлĕхĕсене те вĕсем кăтартса панă.

Англире пулнă вăхăтра Энгельс Англири рабочи класăн пурнăçĕпе кĕрешĕвне тĕпчесе вĕреннĕ. Çакăн хыççăн вара вăл 1845 çулта «Англири рабочи класăн положенийĕ» ятлă кĕнеке çырса кăларнă. Çак произведенире Энгельс, Англири рабочи класăн çав тери хăрушла чухăнлăхĕн картинине сăнласа панă та, вара шăпах Англири рабочи класăн çавăн пек йывăр та правасăр положенийĕ пролетариата хăйне ирĕке кăларассишĕн кĕрешме хĕтĕртнине чи малтан ăнлантарса панă. Çав кĕнеке рабочисен социализмла юхăмне аталантарас тĕлĕшпе питĕ пысăк вырăн йышăнса тăнă. 1847 çулта Маркспа Энгельс, «Коммунистсен партийĕн манифестне» çырса, ăна 1848 çулта пичетлесе кăларнă. «Çак произведенире, — тесе çырнă Ленин,—тĕнче çине çĕнĕлле мĕнле пăхмаллине, социальнăй пурнăçа та вĕçĕмрен пĕтĕçтерсе ыракан материализма, аталану çинчен пур енлĕн те тарăнăн вĕрентекен диалектикăна, класс кĕрешĕвĕн теорине тата пролетариатăн—коммунизмла çĕнĕ общество тăвакăнăн—пĕтĕм тĕнчери историллĕ революциллĕ пĕлтерĕшне çав тери уççăн та уçăмлăн сăнласа кăтартса панă».

«Коммунистсен партийĕн манифесчĕ» буржуазие хирĕç пыракан класс кĕрешĕвĕнче пролетариат аллинчи питĕ хăватлă хĕçпăшал пулса тăчĕ.

Энгельсăн теори çинчен çырнă ĕçĕсем хушшинче «Анти-Дюринг» ятлă кĕнеки уйрăмах паха вырăн йышăнса тăрать. Иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенче Германири социал-демократи хушшинче Берлинри приват-доцентăн Евгений Дюрингăн реакциллĕ-утопиллĕ шухăшĕсем анлăн сарăлнă пулнă. Çак шухăшсене пропагандăлани тата Германири социал-демократсен партийĕн руководителĕсем вĕсемпе килĕшсе пурăнни Маркспа Энгельса питĕ тарăхтарнă. Хăйĕн «Анти-Дюринг» ятлă ĕçĕнче Энгельс Дюрингăн шухăшĕсене хытăн критиклерĕ, марксизмăн виçĕ тĕп пайне—философие, политика экономикине тата социализма пĕтĕмĕшпе тата тарăнăн ăнлантарса панă. Каярахпа Ленин çапла палăртнă: «Анти-Дюринг» вăл ăстанлă кашни рабочишĕн куллен кирлĕ кĕнеке пулса тăрать, тенĕ.

Энгельсăн тĕп ĕçĕсенчен пĕри «Çемье, уйрăм çын харпăрлăхĕ тата государство пулса кайни» ятлă произведени пулать. Вăл 1884 çулта пичетленсе тухнă. Ку произведенире çемьесен формисем, тĕрлĕ халăхсен йăх стройĕ мĕнле пуçланса, аталанса пыни çинчен материалистла ăнлантарса панă, çавăн пекех Афины, Рим, вăтам ĕмĕрсенчи государствăсем тата халăхи буржуаллă государствăсем пуçланса кайнин условийĕсене кăтартса панă. Энгельс тата «Людвиг Фейербах» ятлă питĕ чаплă кĕнеке çырса кăларнă. Ку кĕнекере вăл Гегельпе Фейербахăн философине ăнлантарса парса критиклерĕ.

40 çула яхăн Энгельс Маркспа пĕрле ĕçленĕ. Энгельс хăйĕн тусĕн тата соратникĕн чи пысăк ĕçне—«Капитала» питĕ пысăк хак панă. «Çĕр çинче капиталистсемпе рабочисем пуçланса кайнăранпа,—тесе çырнă вăл,—çак пирĕн умра выртакан кĕнеке пекки рабочисем валли пĕр кĕнеке те тухман-ха» (Соч., т. XIII, I пай, 230 стр.). Маркс çак пысăк кĕнекене çырнă вăхăтра Энгельс ăна канашсем парса, экономика ыйтăвĕсем тĕлĕшпе ытти тĕрлĕ материалсем парса пысăккăн пулăшнă. Кун çинчен Маркспа Энгельс пĕр-пĕрин патне çырнă çырусем те лайăх каласа параççĕ.

Маркс вилнĕ хыççăн Энгельс хăйĕн аслă тусĕн ĕçне—«Капитала», тусĕнчен çырса пĕтермесĕр юлнăскере, çырса пĕтерессине хăй çине илнĕ. Маркс пурăннă чухне «Капиталăн» 1-мĕш томĕ кăна пичетленнĕ пулнă, тепĕр икĕ томĕн алçырăвĕсем, пысăк çайĕ черновиксем çеç, редакциленменскерсем, юлнă. Энгельс хăй умне çав черновикла материалсенчен çырса пĕтерне пĕрлĕхлĕ произведени тăвас задача лартнă. Уйрăмах «Капиталăн» III-мĕш томне хатĕрлесе пичете парас тĕлĕшпе нумай ĕçлеме тивнĕ. Çак ĕçе Энгельс питĕ ăнăçлăн туса пĕтернĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ Ленин çапла çырнă: «Капиталăн» çак икĕ томĕ — Маркспа Энгельсăн иккĕшĕн ĕçĕ пулса тăрать».

Маркспа Энгельс аслă ученăйсем, наукăллă коммунизма тăвакансем çеç пулман, вĕсем тата çуламлă революционерсем, тĕнчери рабочисен юхăмне ертсе пыракансем пулнă. Вĕсем рабочи класăн коммунистла малтанхи организацине—«Коммунистсен союзне» тата пролетариатăн пĕтĕм тĕнчери организацине—«Рабочисен Пĕтĕм Тĕнчери Юлташлăхне» — Пĕрремĕш Интернационала тунă.

1848 çулхи революци вăхăтĕнче Энгельс Маркспа пĕрле демократиллĕ хаçат редакцине—«Рейнри çĕнĕ хаçата» ертсе пынă. Çак хаçатра Энгельс Пруссири реакцине хирĕç темиçе питĕ лайăх статья çырса пичетлесе кăларнă. Революцин чи йывăр тапхăрĕнче Энгельс революци çапăçăвĕсене алла хĕçпăшал тытса хутшăннă. Чылай хаяр çапăçусенче вăл паттăрлăх, хăюлăх тата пуçарулăх кăтартса панă. Малалла Энгельс вăрçă науки тĕлĕшпе ăнăçлăн ĕçленĕ. Вăл вăрçă ĕçĕ çинчен çырнă статьясене çынсем питĕ интересленсе вуланă. Вулакансем çав статьясене вăрçă ĕçĕн паллă деятель çырнă пуль тесе шутланă. Маркс çемьинче ăна яланах «генерал» тесе чĕннĕ. Чăнах та, Энгельс вăрçă наукине питĕ пуянлатнă. Вăрçă ĕçĕ тĕлĕшпе çырнă унăн произведенийĕсем халĕ те питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вăрçă, унăн техники тата политикăллă содержанийĕ пĕр-пĕр вăрçа хутшăннă класран тата обществăлла стройран килнине вăл пуринчен малтан ăнлантарса панă. Вăл ирĕке тухнă халăхăн çарĕ хăйĕн техникин, тактикин тата стратегийĕн никам çĕнтерейми вăй-хăвачĕпе палăрса тăрассине малтанах курса каласа панă.

Энгельс Маркспа пĕрле пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмне ертсе пынă. Вĕсем Интернационал ĕçĕн пур паха ыйтăвĕсене те пĕрле сÿтсе-явнă, прудонистсене, бакунистсене, лассальянецсене тата ытти сектăсемпе юхăмсене хирĕç, рабочи класăн юхăмне аталанса пыма кансĕрлекенсене хирĕç çав тери хаяррăн кĕрешнĕ. Маркспа Энгельс Европăра тата Америкăра революциллĕ юхăм аталанса пынине тĕплĕн сăнаса тăнă, тĕрлĕ çĕршывсенчи социалистсене рабочисен партийĕсене туса çирĕплетме пулăшнă. Европăри халăхсен нумай чĕлхисене пĕлни Энгельса тĕрлĕ çĕршывсенчи рабочисен юхăмне ертсе пыракансемпе çыхăну тытма май панă.

Маркс вилнĕ хыççăн пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмне ертсе пырас йывăр ĕç пĕтĕмпех Энгельса тивнĕ. Вăл тĕрлĕ çĕршывсенчи социалистсене пĕчченех канашсем парса ертсе пынă. Европăри тата Америкăри социалистсен партийĕсен лидерĕсемшĕн Энгельс ăслă çулпуçĕ пулса тăнă. «Вĕсем ватă Энгельсăн пĕлĕвĕпе опычĕн пуян тĕп мулĕнчен вăй илсе тăнă» (Ленин). Энгельс пĕтĕм тĕнчери рабочисен юхăмĕн опытне пĕтĕçтерсе, теорипе рабочисен юхăмĕн практики уйăрăлми çыхăнса тăнине тĕтăшах кăтартса панă. Вăл час-часах çапла каланă: наукăллă социализм пĕр-пĕр çĕршыври пролетариат кĕрешĕвĕн опытĕнчен мар, мĕнпур çĕршывсенчи опытран пуçланса кайнă, тенĕ.

Маркспа Энгельс реакцин, чи малтанах Пруссири реакциллĕ правительствăн ĕмĕр килĕшейми тăшманĕ пулнă. Вĕсем хăйсен нумай статьисенче Германире пуçпулса тăракан ирсĕр йĕркесĕрлĕхĕн, правасăрлăхăн, ултавлăхпа суялăхăн картинисене сăнласа панă. «Германин тулашри политики» ятлă статьяра вĕсем Германи ытти халăхсем тĕлĕшпе туса пынă темĕн чухлĕ юнлă преступленисене кăтартса панă. «Французсен пĕрремĕш революцийĕ пуçлансан,—тесе çырнă вĕсем,—каллех урăх халăхсем мар, нимĕçсем хăйсене французсем çине урнă йытăсем пек илсе кайма ирĕк пачĕç... Нимĕç салтакĕсем пулăшнипе çаратнă, вакласа пĕтернĕ Польша; çав салтаксемех сутăнчăкла пăвса хунă Краков; нимĕç ылттăнĕ тата юн пулăшнипе чуралантарнă, çав тери юхăнтарнă Ломбардипе Венеци; Германи вăрттăнла е тÿрремĕнех хутшăннипе, штыкпа, виселицăпа, тĕрмепе, галерăпа путлантарса лартнă Италири ирĕклĕхĕн юхăмĕ... Германи çылăхĕсем татах та ытларах...» («Маркспа Энгельс «Германири реакцие хирĕç», ИМЭЛ, 1944 ç., 5—7 стр.).

Маркспа Энгельс çапла кăтартса панă: Германи тунă çав преступленисемшĕн нимĕç правительстви çеç мар, нимĕç халăхĕ те айăплă, мĕншĕн тесен вăл çав преступленисене тунă чухне правительствăна итлесе ĕçленĕ. «Вăл çавăн пек суккăрланман пулсан, тарçăланман пулсан, ландскнехтсен тата «ырă кăмăллă» палачсен вырăнне йышăнма хатĕр пулман пулсан, «турă ырлăхлĕ» господасен аллинчи хĕçпăшал пулма килĕшмен пулсан,—«нимĕç» сăмаха ют çĕршывсенче çавăн пек курайманлăхпа, çавăн пек ирсĕррĕн те ылханлăн асăнман пулĕччĕç. Германи чуралантарнă халăхсем тахçанах ирĕклĕн те йĕркеллĕн аталанма тытăннă пулĕччĕç» (çавăнтах, 7-мĕш стр.). Шăпах реакци ĕнтĕ Германи фашизмне влаçа тытса илме çăмăллатнă, Гитлера тĕнчери çĕнĕ вăрçа пуçласа яма, Совет Союзĕ çине вăрă-хурахла тапăнма, историре ку таранччен пулман тискерлĕхсем тума ирĕк панă.

Маркспа Энгельс Российăна, унăн экономикăллă аталанăвĕпе революциллĕ юхăмне яланах интересленсе сăнанă. Маркс пекех Энгельс та вырăссен политика деятелĕсемпе—Даниельсонпа, Лопатинпа, Плехановпа, Вера Засуличпа тата ыттисемпе те çырусем урлă çыхăну тытнă. Вырăс чĕлхине лайăх пĕлнĕ пирки Энгельс вырăс классикĕсен произведенийĕсене вырăслах вуланă. Энгельс вырăссен аслă мыслителĕсен—Чернышевскипе Добролюбовăн произведенийĕсене уйрăмах пысăка хурса хакланă. Народниксем патне çырнă хăйĕн çырăвĕсенче Энгельс Россия аталанăвĕн çулĕ çинче народниксем тĕрĕс мар пăхнине, вырăс общинисем урлă, капитализма кĕмесĕрех, тÿрех социализм патне куçма пулать тесе тĕрĕс мар шутланине ăнлантарса панă. Российăра, капитализм аталанса пынă май, ытти çĕршывсенчи пекех, кирек епле пулсан та общинăсем саланассине кăтартса панă.

Энгельс вырăссен патша стройĕн çирĕп тăшманĕ пулнă, ăна хирĕç вăл ывăнмасăр кĕрешнĕ. Вăл çĕнĕ ĕмĕрĕн пуçламăшĕнче Российăра революци çĕнтерет тесе малтанах питĕ тĕрĕс каласа панă. 1895 çулхи февраль уйăхĕнче, хăй вилес умĕн темиçе уйăх маларах, Энгельс Плеханов патне çапла çырнă: «Революци кама та пулин ĕнсерен ярса тытать пулсан, вăл ĕнтĕ II-мĕш Николай пулать», тенĕ.

Российăра марксизма сарас тĕлĕшпе «Ĕçе ирĕке кăларас группа» тунă ĕçсене палăртнипе пĕрлех, Энгельс унăн ситменлĕхĕсене те кăтартса панă. Сăмахран, вăл малтанхи вырăс марксисчĕсене çав вăхăтра Российăшăн питĕ паха вырăн йышăнса тăнă аграрнăй ыйту тĕлĕшпе ĕçлеме кирли çинчен асăрхаттарнă.

Засулич патне янă çырусенчен пĕринче Энгельс «часах ак Российăра хăйĕнче те ĕçлеме пултаракан çулпуçĕсем тухĕç», тесе шантарса çырнă. Шăнах çав çулсенче ĕнтĕ Владимир Ильич Ленин революциллĕ ĕçе тытăннă.

Маркспа Энгельс хăйсен теорине догма вырăнне хурса мар, ĕçре ертсе пыракан теори вырăнне хурса хакланă. Вĕсем çапла шутланă: вĕсен чăн-чăн наука пулса тăракан вĕрентĕве яланах аталанса, лайăхланса, пролетариатăн революциллĕ кĕрешĕвĕн опычĕпе пуянланса пымалла. Ленинпа Сталин, наукăллă социализма историллĕ çĕнĕ условисенче, империализмпа пролетарилле революцисен тапхăрĕнче аталантарса, ăна çĕнĕ пусăма çĕкленĕ чăн-чăн марксистсем пулса тăраççĕ. 1899 çултах «Пирĕн программа» ятлă статьяра Ленин Маркс теорийĕ çинчен çапла çырнă: «...Маркс теорийĕ утопирен социализм наукине турĕ, çав наукăн çирĕп никĕсĕсене палăртрĕ тата çав наука малалла аталанса пымалли, ăна пур уйрăм тĕслĕхсенче те килĕштерсе малалла аталантарса пымалли çула палăртса хучĕ». Çак задачăна Ленинпа Сталин чыслăн татса пачĕç.

Аслă Ленин капитализмăн чи çÿлти пусăмĕ пулса тăракан империализма наука енчен тĕпчесе ку тĕлĕшпе теори туса пачĕ, Маркс вĕрентĕвне малалла аталантарчĕ, пролетариат революцийĕ, пролетариат диктатури çинчен, пролетариат диктатурин государство формийĕ пулса тăракан Совет влаçĕ çинчен вĕрентÿ туса хатĕрлерĕ. Вăл социализмлă революцин теорине, капитализмла çĕршывсен йĕри-тавралăхĕнчи пĕр çĕршывра социализм çĕнтерме пултарнине кăтартса пачĕ. Маркспа Энгельс парти çинчен малтанласа пĕтĕмĕшлĕн каласа панине аталантарса, Ленин пролетариат организацийĕн чи çÿлти пусăмри класлă формийĕ пулса тăракан, рабочи класăн диктатурине ертсе пыракан вăй пулса тăракан коммунистсен партийĕ çинчен тунă вĕрентĕве çитĕнтерчĕ. Сталин юлташ—Ленинăн ĕçне генилле малалла туса пыраканĕ — марксистла-ленинла наукăна малалла аталантарчĕ, ăна рабочи класс кĕрешĕвĕн çĕнĕ опычĕпе, çĕр чăмăрĕн улттăмĕш пайĕнчи социализм строительствин опычĕпе пуянлатрĕ.

* * *

Фридрих Энгельс вилнĕренпе 50 çул иртрĕ. Çак вăхăт хушшинче пулса иртнĕ историллĕ аслă событисем марксизм-ленинизмăн пурнăçри аслă вăйне кăтартса пачĕç. «Маркс вĕрентĕвĕ пур енчен те питĕ вăйлă, мĕншĕн тесен вăл тĕрĕс вĕрентÿ», тенĕ Ленин.

Ленинпа Сталин, вырăс рабочи класне ертсе пырса, вырăссен пролетари революцийĕ çĕнтересси патне илсе пычĕç. Вĕсем тĕнчери пĕрремĕш совет государствине çирĕплетес ĕçе, классăр, социализмлă общество тăвас ĕçе ертсе пычĕç.

Совет халăхĕн тата мĕнпур этемлĕхĕн тăшманне—нимĕç фашизмне хирĕç пынă кĕрешÿре Ленинпа Сталин вĕрентĕвĕ совет çыннисене хавхалантарса пычĕ. Вăрçăра Совет Союзĕ гитлерла Германие çĕнтерни марксизм-ленинизмăн малта пыракан идейисем фашистла реакцин вăйĕсене çĕнтерни те пулса тăрать.

Ленин—Сталин ялавĕ айĕнче совет çыннисем хамăрăн социализмлă Тăван çĕршыв мухтавĕшĕн, унăн çарпа экономика вăй-хăватне малалла çирĕплетессишĕн татах паттăр ĕçсем тăвĕç.

А. ТУШУНОВ,
Маркс—Энгельс—Ленин Институчĕн директорĕн заместителĕ.

МТС-сем АВГУСТĂН 1-мĕшĕ ТĔЛНЕ МĔНЛЕ ĔÇЛЕНИНЕ КĂТАРТАКАН СВОДКА (процентпа)

МТС-сем	Çулталанăкри ĕç планне тултарнă (авăн çапнисĕр)	Çĕртме тунă	Комбайнсем юсанă	Молотилкăсем юсанă
Вăрнар	111,8	125,0	100,0	100,0
Буславкка	100,2	129,7	100,0	90,9
Шăхасан	92,2	137,9	83,3	80,0
Йĕпрес	90,5	118,0	100,0	100,0
Вăрмар	83,0	139,5	100,0	80,0
Сĕрпÿ	82,6	99,8	75,0	88,8
Ишлей	81,7	119,1	88,8	61,2
Красноар-ски	80,3	146,1	100,0	58,3
Канаш	78,5	76,3	76,9	40,0
Чкаловски	77,4	118,3	56,5	75,0
Комсомольски	72,8	93,3	80,0	77,7
Калинино	70,5	141,1	85,7	76,9
Элĕк	66,3	79,9	71,4	53,3
Тăвай	63,7	94,6	41,1	35,7
Шупашкар	61,5	86,6	100,0	36,3
Çĕмĕрле	59,9	91,1	77,7	55,5
Хĕрлĕ Чутай	57,4	101,2	100,0	60,0
Сĕнтĕр	54,7	95,8	100,0	50,0
Етĕрне	54,5	125,6	57,1	—
Улатăр	53,6	54,3	85,0	83,3
Сĕнтĕрвăрри	52,8	82,0	100,0	88,8
Октябрьски	48,1	73,9	57,1	45,4
Сиява	46,8	24,5	—	—
Елчĕк	42,4	24,0	34,7	37,5
Кувакино	42,2	32,7	55,5	71,4
Сурмайдан	40,8	—	35,2	40,0
Первомайски	37,6	85,8	66,6	—
Шăмăршă	36,3	50,0	58,3	30,0
Пăрачкав	36,2	27,1	—	—

Ответлă ĕç умĕнхи шăплăх

Советски районĕнчи Лапракассинчи «Сталинград» колхоз тырпул пухса кĕртме хатĕрленес тĕлĕшпе вырăнтан та хускалман теме пулать. Жнейкăпа молотилкăсене юсаман. Çурлăсене шăллаттарман. Тимĕрçĕ пур, анчах ăна ĕçлеттермесçĕ. Тырă хумалли складсене йĕркене кÿмен. Колхозăн кăçал 280 гектар çинчи тырпула пухса кĕртмелле.

Çакăн пек шăплăха чылай колхозсенче курма пулать. Районри колхозсем тырпул пухса кĕртме начар хатĕрленеççĕ. Якаткасси, Сухра, Кивтиккен ял Совечĕсенчи колхозсенче те начар хатĕрленеççĕ.

Çак кунсенче кашни колхозрах ВКП(б) райкомĕпе райисполкомăн уполномоченнăйĕсем пулчĕç. Вĕсенчен чылайăшĕсем колхозра тырпула пухса кĕртме хатĕрленес ĕç мĕнле пулса пынипе тĕплĕн паллашмасăрах, пулăшу памасăрах райцентра таврăнчĕç.

Ванькушкĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозра райисполком председателĕн заместителĕ И. Лебедев пулчĕ. Вăл пĕр кун хушши правлени умĕнче каласса ларчĕ те нимĕн тумасăрах каялла тухса кайрĕ. Ку колхозра апрель уйăхĕнчепе ĕнтĕ председатель çук. Ĕç дисциплини япăхса кайнă, тырпул пухса кĕме хатĕрленес тĕлĕшпе нимĕн те туман. Молотилкăсем хĕл каçах итем çинче, юр айĕнче ларчĕç.

Райçĕрĕç пайĕ тырпул пухса кĕртес ĕç мĕнле пыни çинчен кашни кунах сводка пухать. Анчах хăшпĕр колхозсем суя сведенисем параççĕ. Вара кунта çав сведенисемпе лăпланса лараççĕ. Ĕç мĕнле пынипе тĕплĕн паллашмаççĕ.

Районри колхозсем 139 молотилкăран 87-ăшне çеç юсанă. Жнейкăсене те юсаса çитермен. Тимĕрçĕсем çук колхозсене тимĕрçĕсем çирĕплетсе паман. Хăшпĕр тимĕрçĕ лаççисенче кăмрăк çук. Колхозсенче машинăсем валли пайсем тупма тăрăшмаççĕ.

Колхозсенчи 136 витнĕ итемрен 79-ăшне çеç юсанă-ха. Тырă хумалли складсене, транспорт инвентарĕсене чылай колхозсем хатĕрлесе çитермен. Клеймо çаптарман тарасасем те нумай.

Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ М. Дмитриев колхозсем тырпул пухса кĕртме мĕнле хатĕрленни, хăш колхозра ĕç планĕсем туни çинчен тĕплĕн пĕлмест, çапла райçĕрĕç пайĕ колхозсене ĕç планĕсем тума пулăшса пымасть. Тĕрĕссипе, чылай колхозсенче тырпул пухса кĕртмелли ĕç планĕсем çук.

Партипе правительство тырпул пухса кĕртесси тата ялхуçалăх продукчĕсем хатĕрлесси çинчен йышăннă постановленине колхозниксене ăнлантарса парассине тивĕçлипе йĕркелемен. Районра çав постановлени çинчен илтмен колхоз членĕсем кăна мар, председательсем те пур.

Районра тырпул пухса кĕртме хатĕрленсе çитнĕ колхозсем те сахал мар. «Сеятель», «Комбайн», «Радио», «Спутник колхозника» колхозсем тырă вырма тухма хатĕр. Анчах вĕсен ĕçри опытне ытти колхозсене сарас тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ.

Я. СИГАЕВ.

Июльри плана ытлашшипех тултарнă

Якунин юлташ главнăй инженер пулса ĕçлекен завод коллективĕ Çĕнтерÿ ячĕпе пыракан социализмлă ăмăртура ăнăçлăн ĕçлет. Завод июль уйăхĕнчи производство программине 106,3 процент тултарнă.

Уйрăм цехсенчен Эрусте юлташ начальник пулса тăракан цех иртнĕ уйăхри плана чи малтан тултарнă. Каневский, Оржеборский тата Кинсбургский юлташсен цехĕсем те июль уйăхĕнче планпа палăртнă чухлех продукци туса кăларнă.

Англи королĕ Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен президенчĕпе Трумэнна тĕл пулнă

ЛОНДОН, августăн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Президенчĕ Трумэн августăн 2-мĕшĕнче Англи королĕпе VI-мĕш Георгпа акăлчансен «Ринаун» ятлă крейсерĕ çинче Плимут хули сывăхĕнче тĕл пулнă. Корольпе пĕрле Англин Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсенчи посолĕ лорд Галифакс, Трумэн президентпа пĕрле Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен государство секретарĕ Бирнс тата президент штабĕн начальникĕ адмирал Леги пулнă.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ÇĔНĔРЕН ХУШСА ЛАРТНĂ МИНИСТРСЕМ

ЛОНДОН, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, К. Эттли премьер-министр Букингэм дворецĕнче король патĕнче пулнă хыççăн, паян ирхине лейбористсен çĕнĕ правительствинче çак çынсене уйăрса лартни çинчен пĕлтернĕ:

Шалти ĕçĕн министрĕ—Чатер Ид;
Доминион ĕçĕсен министрĕ—лорд Эддисон;
Инди ĕçĕсен министрĕ—Петик-Лоуренс;
Колонисен министрĕ—Джордж Холл;
Тинĕс министрĕ—Александер;
Çарĕç министрĕ—Лоусон;
Авиаци министрĕ—Виконт Стенсгейт;
Шотланди ĕçĕсен министрĕ — Джозеф Вествуд;
Ĕçпе наци повинноçĕн министрĕ — Айзекс;
Сутĕç министрĕ—Эллом Вилкинсон;
Сывлăх ĕçĕн министрĕ—Эньюрин Бивен;
Çĕрĕç министрĕ—Том Вильямс;
Снабженине авиаци производствин министрĕ—Джон Уилмот;
Транспорт министрĕ—Альфред Барнс;
Апат-çимĕç министрĕ—Бен Смит;
Топливăпа энергетика министрĕ—Эммануэл Шинуэлл;
Государство министрĕ—Ноэль Бейкер;
Пенсисен министрĕ—Уилфред Пейлинг;
Финанс министерствин парламентри секретарĕ—Уильям Уитли.

Петик-Лоуренс лордсен палатине кĕрет, мĕншĕн тесен король ăна барон ятне панă. Айзекса, Эньюрин Бивена, Джон Уилмота, Альфред Барнса тата Шинуэлла король вăрттăн совет членĕсем пулма уйăрса лартнă. Эддисон лорда лордсен палатин лидерĕ туса хунă.

Петэна суд туни

ПАРИЖ, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Августăн 1-мĕшĕнче суд ларăвĕ пуçлансанах суд председателĕ Монжибо çапла каланă: суд процесĕ мĕн пуçланнăранпах тĕрĕс çулпа пымасть, тенĕ. Вара ун хыççăн генеральнăй прокурор Морне çакăн пек каланă:

«Судăн,—тенĕ вăл,—чăн-чăн процесс пуçласа ярас пулать. Нимĕçсемпе тунă килĕшÿ—Петэна айăплакан ĕçсен пуçламĕшĕ кăна. Ку процеса тĕрĕс ертсе пыма, тĕпрен илсен, документсем пулăшаççĕ, свидетельсем кăтартнисем, вĕсем темĕн пек пулсан та, иккĕмĕш вырăнта кăна тăраççĕ. Эпĕ судьясене, присяжнăйсене тата хÿтĕлекен адвокатсене нимĕçсемпе тунă килĕшÿ çинчен тата унччен пулнă ĕçсем çинчен текех каламашкăн пăрахма ыйтатăп, мĕншĕн тесен процесăн никĕсĕ вĕсем мар».

Çакăн хыççăн вара суд свидетельсенчен ыйтма пуçланă. Эринг ятлă свидетель намăса пĕлмесĕр, Петэна мухтанă, çакăн пирки залра хумхану пулса иртнĕ.

Кăнтах тăхтанă хыççăн суд Шебе подполковник свидетеле итленĕ. Вăл оккупаци вăхăтĕнче вăрттăн ĕçленĕ, ун чухне унăн урăх, суя хушамат—Грегуэр пулнă. Çав свидетель çапла каланă: эпĕ Петэна Францие тăшмана сутнăшăн айăплатăп, Петэн пирки чăн-чăн французсем полицине гестапо аллине лекрĕç. Час-часах Петэн Франци патриочĕсене хăех тăшман аллине парса тăчĕ. Французсен Тулонри флотне путарни çинчен асăннă май, Грегуэр çапла каланă: Тулонран тухса кайма флотăн пур майсем те пулнă, анчах та вăл ĕçе Петэн хутшăннă пирки флот пĕтсе ларчĕ. «Çакăншăн пуриншĕн те Петэн чĕркуçленсе ларса Францирен каçару ыйтма тивĕçлĕ»,—тесе кăшкăрса пĕтернĕ хăйĕн сăмахне свидетель.

Хÿтĕлекен адвокатсем ыйтнипе темиçе свидетель, Эринг пекех, Петэна мухтанă. Сăмахран, дивизи генералĕ Ботье свидетель пулса каласа панă. Çак генерал Петэн штабĕн начальникĕ пулнă, унтан вăл Петэн кабинечĕн директорĕ пулса ĕçленĕ. Çав «свидетельсем» пĕри те Петэн Гитлерпа килĕшÿ тунă хыççăнхи ĕçсем çинчен нимĕн те шарламан. Çавăн пирки вара суд председателĕ Монжибо свидетельсене суд процесне тивĕçлипе тивекен ыйтусем çинчен каласа кăтартма ыйтнă.

БАВАРИРЕ ПАЛЛĂ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ТЫТСА ХУПНĂ

ЛОНДОН, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: союзниксен оккупаци çарĕсем Баварире йышлă ухтарусем тунă. Çав ухтарусенче вĕсем паллă гитлеровецсене чылай ярса тытнă. Вĕсен шутĕнчен çаксем лекнĕ: обергруппенфюрер принц Рихард Гессенский, 1935 çултан пуçласа 1944 çула çитиччен Финляндире Германи посланникĕ пулса ĕçленĕ Виперт фон Блюхер, Венгрин пуканелле «премьер-министрĕ» Стояи, Германин финанс министерствин статс-секретарĕ Фриц Рейнгарт хăйĕн вунă сотрудникĕпе пĕрле, нимĕçсен Данциг хулинчи полицей-президенчĕ пулнă Вельтер Штейн, посол пулнă фон Ринтелен хăйĕн сакăр сотрудникĕпе пĕрле, нимĕçсен сывлăх министрĕ пулнă Фиксенше, нимĕçсен вăрçă производствин министерствипе ĕç министерствин паллă сотрудникĕсем Ганс Вундерна Ганс Дорван, Мильх фельдмаршалăн адъютанчĕ Макс Пенделе полковник. Макс Пендеге çуменче вĕсем фельдмаршалпа иккĕшĕ пĕр-пĕрин патне çÿретнĕ çырусене тупнă.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви панă хыпарсем тăрăх, союзниксен Лăпкă океан çинчи вăйĕсен командованийĕн штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен Окинава утравĕ çинче вырнаçса тăракан 250 бомбардировщикĕпе истребителĕ Японин Нагасаки хулине тапăннă. Японин 10 суднине шыва путарнă, 4 суднине сиенленĕ, 6 самолетне персе ÿкернĕ. Американецсен ытти самолечĕсем Китай çыранĕсем патĕнче Японин 5 грузовой суднине тата пĕр транспортне шыва путарнă е сиенленĕ тата Хайнань утравĕ çинче Япони казармисемпе порти сооруженийĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

ВАШИНГТОН, августăн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен Лăпкă океан çинчи флочĕн штабĕ çапла пĕлтерет: Америкăн виççĕмĕш флотĕнчи самолечĕсем июлĕн 30-мĕшĕнче Токио районне тапăннă чухне Японин пĕр баржине 11 пĕчĕк суднине шыва путарнă, 16 суднине сиенленĕ, пĕр самолета пĕтерсе тăкнă, 42 самолета сиенленĕ, 4 ангар, 4 паровоз пĕтерсе тăкнă тата 11 паровозпа 15 ангара сиенленĕ. Акăлчансен авианосецсем çинчен вĕçсе улăхнă самолечĕсем японецсен пĕр подводнăй лодкине, пĕр эсминецне шыва путарнă, икĕ эсминеца, пĕр эскорт суднине тата ытти 14 суднана сиенленĕ.

ВАРШАВАРИ ПĂЛХАВРА ВИЛНИСЕНЕ АСĂНСА ИРТТЕРНĔ ХУРЛĂХЛĂ МИТИНГ

ВАРШАВА, августăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Паян пĕтĕм Польшипех Варшава хулинче пăлхав пулса иртнĕренпе çулталăк тултарнине палăртнă. Çав пăлхавра вилнисене пытарнă Варшава çывăхĕнчи çар масарĕнче вăхăтлăх памятник лартнă. Памятник уçнă çĕре паян Варшава çыннисем пиншерĕн пынă.

Хурлăхлă митингра Варшава хулин президенчĕ Толвинский, Польшăри рабочисен партийĕ ячĕпе Дворковский, Польшăри социалистсен партийĕн ячĕпе — Гаевский, «Стронництво людове» ячĕпе — Цуны, «Стронництво демократичне» ячĕпе —Бепигер, Варшава партизанĕсен ячĕпе —Елена Яворска сăмах каланă. Тухса калакансем, влаçа хăйсен аллине тытса илес шутпа, поляк реакционерĕсем Варшăра вăхăтсăр выступлени пуçарса сутăнчăкла ĕç тунине палăртнă. Тухса калакансем çав вăхăтрах тăван çĕршыв хÿтлĕхне сыхлакан халăхăн пысăк паттăрлăхне хисеплесе чысланă.

Памятник çине Варшава хулинчи политикăллă партисенчен, общество организацийĕсенчен тата уйрăм гражданесенчен чечек çыххисем хунă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ПАТĂРЪЕЛĔНЧИ, КАЛИНИНĂРИ, КАНАШРИ, ПĂРАЧКАВРИ, ÇĔРПӲРИ ТАТА ЕТĔРНЕРИ ПЕДАГОГИКА УЧИЛИЩИСЕМ 1-МĔШ КУРССЕНЕ ВĔРЕНМЕ ИЛЕÇÇĔ

Педагогика училищисем пуçламĕш шкулсем валли учительсем вĕрентсе хатĕрлеççĕ, Канашри педагогика училищи кунсăр пуçне тата дошкольнăй учрежденисем валли воспитательсем вĕрентсе хатĕрлет.

Педагогика училищисене 14 çултан пуçласа 25 çула çитнĕ çынсене, вăтам шкулăн 7-мĕш класĕнчен вĕренсе тухнисем чухлĕ пĕлекеннисене илеççĕ.

Техникума вĕренме кĕрес текенсен çак предметсемпе экзамен памалла: вырăс чĕлхипе (сăмахпа каласа тата çырса), тăван чĕлхепе (сăмахпа каласа тата çырса), арифметикăпа (сăмахпа каласа тата çырса). 7-мĕш класран отличнăй вĕренсе тухнисене çав класран вĕренсе тухнă хыççăнхи икĕ çул хушшинче педагогика училищисене экзаменсĕрех илеççĕ.

Заявленисене сентябрĕн 11-мĕшĕччен йышăнаççĕ.

Заявленисене педагогика училищин директорĕ ячĕпе ямалла. Заявленипе пĕрле çак документсене ямалла: 1) ăçта мĕнле çул вĕреннипе кăтартакан свидетельство (свидетельствăна хăйне, копине мар), 2) хăçан çуралнине кăтартакан свидетельство, 3) автобиографи, 4) виçĕ сăн ÿкерчĕкĕ, 5) Хĕрлĕ Çар тĕлĕшпе мĕнле шутра тăнине кăтартакан справка (ăна çара каймаллисен ямалла), 6) сывлăх çинчен калакан справка.

Педагогика училищине илмелли экзаменсем сентябрĕн 15-мĕшĕнче 20-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Вĕренме илнисене столовăйра апатлантараççĕ тата стипенди параççĕ. Хваттер суккисене общежитие вырнаçтараççĕ.

ЧАССР Наркомпросĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 2—89, секретариатăн — 4—26, пропаганда пайĕн — 2—89, парти пурнăç пайĕн 3—99, промышленность пайĕн — 3—97, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, рабселькорсен пайĕн — 0—67, издательство конторин — 0—23.

НТ 00188. Типографи №1, Управления полиграфпромышленности при ЧАССР. Заказ №2, ф. 6. 59 42 п. п. Тираж 16.000